Районти шкулсенче

# Информаципе коммуникаци технологийĕсене алла илеççĕ

Юлашки çулсенче районти шкулсенче вăй хуракансем информаципе коммуникаци технологийĕсене пурнăçа кĕртессипе, вĕсемпе вĕрентӳ ĕçĕ-хĕлĕнче анлăрах усă курассипе çине тăрса ĕçлеççĕ.

Вĕрентӳ ĕçне модернизациленĕ тапхăрта учительсем çĕнĕрен те çĕнĕ педагогика технологийĕсемпе методикисене алла илеççĕ. Кусем вĕсем проектлă методика, цифрăсемлĕ вĕрентӳ ресурсĕсем, педагогика ĕçĕ-хĕлĕн мониторингĕ, портфолио туса пырасси, çĕнĕ педагогика методикисене туса хатĕрлесси. Информаци технологийĕсене алла илнипе пĕрлех Интернетпа усă курма пултарасллăх та учительсемшĕн уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать.



Кăçал педагогика ĕçченĕсем аттестаци вăхăтĕнче педагогика, психологи тата валеологи ыйтăвĕсем çине хуравланипе пĕрлех информаципе коммуникации технологийĕсем енĕпе те экзамен тытнă. Методика ĕçĕсене хӳтĕленĕ чухне тата портфолио енĕпе учительсем компьютер технологине, мониторинг мелĕсене, диаграммăсем тумалли технологие, материалсене графикăпа сапластарассине, слайдсем туса хатĕрлесе вĕсене кăтартассине, даннăйсен базине туса пырассине, публикацисемпе, цифрăллă электронлă учебниксемпе усă курассине лайăх пĕлнине кăтартса пачĕç.

Хăш-пĕр учительсем хăйсен ĕçĕсем тĕлĕшпе сайтсем хатĕрлерĕç. Вĕсем хушшинче Нискасси шкулĕн информатика учителĕ Ольга Олеговна Сапожникова, Шатракасси шкулĕн пуçламăш классен учителĕ Светлана Алексеевна Терентьева, ачасен районти пултарулăх çурчĕн методисчĕ Светлана Васильевна Егорова.

Учительсем информаципе коммуникаци технологийĕсемпе вĕрентӳ ĕçĕнче питĕ активлă тата тухăçлă усă кураççĕ. Çакна педагогика ĕçченĕсен аттестацийĕ те лайăх кăтартса пачĕ. Информаци технологийĕсене алла илни хальхи педагогика конкурсĕсенче çĕнтерме май паракан тĕп условисенчен пĕри пулса тăрать.

Çак кунсенче районта класс ертӳçисем хушшинче «Самый классный классный» конкурс иртет. Конкурса хутшăнакансен хăйсен конкурс ĕçĕсене сайт мелĕпе тăратмалла. Шкулсенчи учительсем пултарулăх сайчĕсене туса хатĕрлессин технологине алла илеççĕ. Çĕнĕрен вара вĕсем хăйсем класс ертӳçин ĕçĕ-хĕлĕнче информаци технологийĕсемпе усă курма пĕлнине кăтартса параççĕ.

2007 çулта «Вĕрентӳ ĕçĕн системине информатизацилесси» Федераллă проектпа килĕшӳллĕн районти 80 учитель ресурс базисенче квалификацие ӳстермелли курссенче пулнă. Ку курссене Йӳçкасси шкулĕн информатика учителĕ Ольга Валерьевна Тихонова тата çак йĕркесен авторĕ ирттернĕ. Унта хутшăннă май учительсем уроксене информаципе коммуникаци технологийĕсемпе усă курса йĕркелеме, ачасемпе ĕçлессипе проект методикипе усă курма, сайт тĕлĕшпе электронлă портфолио йĕркелеме, электронлă почтăпа усă курма тата Интернет ресурсĕсемпе усă курма пултарнă.

Курссене тĕрлĕ енлĕ виçĕ программăпа ирттернĕ. Кусем вĕсем «Учитель ĕçĕ-хĕлĕнче информаци тата телекоммуникаци технологийĕсемпе усă курасси» (база хатĕрленĕвĕ çук учительсем валли), «Учитель ĕçĕ-хĕлĕн практикинчи информаци технологийĕсем» тата «Ачасене информаципе коммуникаци технологийĕсемпе анлăрах усă курма хăнăхтарасси». Унта çӳрекенсем пурте курссенче пулнă пирки документсем илчĕç, хăйсен пултарулăх ĕçĕсене хӳтĕлеме пултарчĕç. Муркаш шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕн Елена Николаевна Ефанован, Сосновка шкулĕн математикăпа информатика учителĕн Зинаида Андреевна Антонован, Очăкасси шкулĕн истори учителĕн Наталия Григорьевна Романован, Калайкасси шкулĕн чăваш чĕлхипе литературин учителĕн Эльвира Владимировна Портнован, Шомик шкулĕн директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн Татьяна Михайловна Майорован, Мăн Сĕнтĕр шкулĕн физикăпа технологи учителĕн Юрий Алексеевич Максимовăн, Москакасси шкулĕн социаллă педагогĕн Елена Владисовна Поркинан, Сосновка шкулĕн пуçламăш классен учителĕн Ангелина Иосифовна Белован, Сосновка шкулĕн обществознанипе географи учителĕн Ольга Ивановна Рылинан, Муркаш шкулĕн вырăс чĕлхипе литературин учителĕн Эмма Александровна Федорован, Турай шкулĕн директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕн Ирина Николаевна Иванован, Йӳçкасси шкулĕн музыка учителĕн Александр Витальевич Аникинăн, Йӳçкасси шкулĕн историпе обществознани учителĕн Владислав Иванович Тихоновăн ĕçĕсене уйрăмах лайăх енчен палăртмалла.

**А. ЛЕСКИНА,**
**район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн программисчĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: учительсем Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче квалификацие ӳстермелли курссенче.**

Республика кунĕ умĕн

# Чăвашлăха манар мар

Январĕн 19-мĕшĕнче район хаçатĕнче «Республика кунне хатĕрленсе» ярăмпа Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕн Н.И. Никитинăн «Пит хĕретмелле ан пултăр тетпĕр» статйи пичетленнĕччĕ.




«Муркаш ялĕ – район центрĕ. Çынсем тата хăнасем Муркаш сăн-сăпачĕ, кунти культура тăрăх пĕтĕм района хак параççĕ тесе шутлатăп...»,– çырать автор.




Мĕнех, питĕ тĕрĕс сăмахсем. Çавна каласа хăварасшăн. Тирпейлĕхĕ, илемлĕхĕ, хуллен пулин те, малалла кармашать пулин те, культура енĕпе çитменлĕхсем сахал мар-ха. Чи малтанах эпир хамăрăн тăван чĕлхене хисеплеме пĕлменни канăçсăрлантарать. Муркаш ялĕнче те çакă куç умне тухса тăрать. Республика кунне пирĕн районта ирттерме йышăннă хыççăн пушшех те.







Муркаша пырса кĕрсен те пире «Ырă сунса кĕтетпĕр» тесе мар, «Добро пожаловать» тесе кĕтсе илеççĕ. Çĕнĕ хыпарсене, тĕрлĕ пĕлтерӳсене те информаци стенчĕсем çине вырăсла çыра-çыра çыпăçтараççĕ. Районти тĕрлĕ мероприятисене ирттернĕ чухне те ытларах вырăсла калаçнине илтме пулать.

Тĕрлĕ фирмăсен, суту-илӳ предприятийĕсен ячĕсене чăвашла çырса вырнаçтарсан лайăххах. Урам ячĕсем те чăвашла тĕрĕс çырăнманнисем çук мар-ха Муркаш ялĕнче. Хăнасем «Моргаушине» мар, «Муркаша» пырса çитсен тем пекех аванччĕ. Ун чухне Муркашра чăннипех чăвашсем пурăнаççĕ тесе калама май пулĕ.

Чăваш юрри-кĕввипех ытларах ташласчĕ те юрласчĕ çак уявра. Республика кунĕн уявĕнче кăна мар, ытти чухне те çынсемпе тăван чĕлхепе вăтанмасăр калаçасчĕ. Уйрăмах ку енĕпе пуçлăхсен, культура ĕçченĕсен тĕслĕх кăтартмалла тесе шутлатăп. Уяв хыççăн та çак ырă пулăм ан пĕттĕрччĕ.

**И. МАЙКОВ.**

Кашмаш ялĕ.

Вулакан калаçăва чĕнет

# Пурте вĕренеççĕ, кам ĕçлет?

60-мĕш çулсенче пирĕн ялта икĕ тракторист пулнă. Хуçалăх ертӳçисем те, вĕсенчен ытларах халăх хисепленĕ «хурçă ут» хуçисене. Хирти ĕçсене тунă чухне вĕсене Утатти тăхлачă апат пĕçерсе çитеретчĕ. Ара, колхозсенче столовăйсем пулман. Каярахпа трактористсем нумайланса кайрĕç те вĕсене хисеплеме те пăрахрĕç.

Паян аслă шкулта вĕренекенсемпе çакăн пек килсе тухрĕ. Пурте вĕренеççĕ. Юристсемпе экономистсем паян ялта трактористсенчен те ытларах.

Акă, хăш-пĕр цифрăсене илер. Совет Союзĕнче пĕтĕмпе 5 миллион студент пулнă. Халăх йышĕ – 300 миллион çын ытла. Раççейре паян – 7 миллион студент. Çынсен хисепĕ – 140 миллион.

Унччен класĕпе комсомола кĕнĕ пулсан, паян класĕпе аслă шкулсене вĕренме кайнăн туйăнать.

Юрĕ, вĕренни лайăх. Çамрăкла вĕренни хут çинче, теççĕ халăхра. Анчах вĕренсе алла диплом илсен ĕçлеме те пултармалла. Аслă шкулта илнĕ специальноçпа вăй хумалла.

Совет саманинче çапла пулнă. Вĕренсе диплом илсен çамрăк специалиста направленипе ĕçлеме янă. Килĕшет-и, килĕшмест-и – санран ыйтса тăман. Тĕттĕм ял вăл е аякри район - ĕçле те хăвна кăтарт. Тарса çӳрекенсене милиципе шыраттаратчĕç.

Шупашкарти автовокзалта икĕ тăхлачă калаçса ларни аса килет. Хайхискерсем Шетмĕпуçпе Йӳçкасси енчен пулчĕç.

- Ывăлăма темĕнле вĕрентсе кăлармалла,- пăшăрханса пуплет пĕри.- Экзаменсем тытайман та укçа тӳлемелле тет. Ăçтан тупас ман çавăн чуль укçа.

Паян нумай çемьере ачипăчине вĕрентмелли тăкаксем пĕрремĕш вырăна тухрĕç. Ял çынни пилĕкне туртса çыхать те ачи-пăчине вĕрентме укçа пуçтарать. Çапла, ашшĕ-амăшĕ ачисемшĕн темĕн тума та хатĕр. Çакна ăнланмалла.

Анчах паянхи студентсен те ашшĕ-амăшне кăштах хĕрхенесчĕ. Малтан хăв кам пулассине çирĕппĕн шутламалла. Кун пек чухне аттеанне çавăтса çӳрессе кĕтсе лармалла мар. Шел пулин те, сана вĕсем ĕмĕрĕпе хăйсен хӳттинче упраймĕç.

Вĕренме кĕрсен ĕçлесе укçа тупма та пултармалла. Паян майĕсем нумай. Эпир те вăхăтра ĕçленĕ. Урам шăлнă, хурал тăнă, вакун пушатнă.

Çапла, вĕренмелле çамрăксен. Анчах çакна аттеанне ĕнси çинче çеç тумалла мар. Ашшĕ-амăшĕ шучĕпе кăна вĕренсе тухаканран йĕркеллĕ специалист пулас çук.

**К. ВАСИЛЬЕВ.**

Редакци почтинчен

# *Пирĕн пултараллă ентеш*

Манăн пирĕн Ильинка ял тăрăхĕнчи пултаруллă хĕрарăмсенчен пĕрин çинчен каласа парас килет. Ку вăл – Анна Николаевна Васильева, 1979 çулта тава тивĕçлĕ шкул ĕçченĕ ятне илме тивĕçлĕ пулнăскер.

Çураласса Анна Николаевна Муркаш районне кĕрекен Кивĕ Матьăк ялĕнче ноябрĕн 1-мĕшĕнче 1934 çулта çуралнă. Унăн ачалăхĕ тата çамрăклăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăнхи йывăр çулсенче иртнĕ. Хăй каласа панă тăрăх, питĕ йывăр килнĕ, ача чухне тăраниччен çывăрса та курман вăл. Шкул пĕтернĕ хыççăн Шупашкарти И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш пединститутне вĕренме кĕрет. Вĕренсе тухсан, алла учитель профессине илсе, вырăс чĕлхипе литературине Йӳçкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта вĕрентет. Сакăрвуннăмĕш çулсенче вăл Ильинка тăрăхне, Куçкин ялне куçса килет. Тивĕçлĕ канăва тухиччен Ильинка шкулĕнче вăй хурать.

Паянхи куна Анна Николаевна килĕнче, аслă Атăл хĕрринче вырнаçнă Куçкин ялĕнче пурăнать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетет. Пахча çимĕç, улма-çырла ӳстерет.

Анна Николаевна пĕртте ахаль лармасть. Килти хуçалăхра тăрмашни кăна çырлахтармасть ăна. Вăл тĕлĕнмелле хитре тĕрĕсем эрешлет. Сăмах май каласан, район Акатуйне Н.В. Федоров Президент килсен, Анна Николаевна ăна тĕрленĕ Святой Николай Чудотворец турăшне парнеленĕ.

Ильинка ял библиотекинче те вăл кĕтнĕ хăна. Унпа тĕл пулма Ильинка шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Людмила Васильевна Семенова, вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенсем Екатерина Зиновьевна Таймаскинапа Светлана Константиновна Яртеева тата аслă классенче вĕренекенсем хаваспах пуçтарăнчĕç.

2002 çулта тухнă «Ват юман юрри» кĕнекене нумайăшĕ вуланă пуль. Анна Николаевна хăйĕн произведенийĕсенче çынлăх, пĕр-пĕрне хисеплени, юратни кашни çыннăн пурнăçĕнче тĕп вырăнта пулмаллине кăтартать. Унсăр пуçне поэмăра автор çут çанталăка юратни, ун илемĕпе савăнма пĕлни курăнать. Анна Николаевна хĕлле те, çулла та Атăла шыва кĕме анать е сивĕ шывпа сапăнать. Çакăн пек самантсенче çуралнă та ĕнтĕ «Савнă Атăл, салам», «Кĕрхи Атăл», «Хумсен юрри», «Моржиха», «Çыранри çăка» тата ытти сăвăсен йĕркисем. Анна Николаевнан çынсене халалланă сăвăсем те нумай. Библиотекăри тĕл пулура та вăл хулăн тетрадьсенчи сăвăсене вуласа пачĕ. Вĕсенче унăн пурнăçĕ: хуйхи те, савăнăçĕ те, ĕмĕчĕ те.

Манăн Анна Николаевнан тата тепĕр сăвă кĕнеки тухасса шанас килет. Хальхи вăхăтра кĕнеке кăларма йывăр, тен, кам та пулин пулăшĕ?!

**А. ХРАМОВА,**
**Ильинка ял библиотекарĕ.**